# Хĕл мучипе Юр пике патĕнче хăнара

*(1-9 классенче вĕренекен ачасем валли хатĕрленĕ Çĕнĕ çул уявĕн сценарийĕ)*

***Л.Г. Васильева,*** *Çĕрпӳ районĕнчи Чиричкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта пуçламăш классене вĕрентекен;*

***Т.В. Григорьева,*** *Çĕрпӳ районĕнчи Кукшакассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен.*

Тĕп тĕллев: ачасене хăйсен пултарулăхне кăтартма хавхалантарасси, пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме хăнăхтарасси.

**Выляканссем:**
*Чĕнӳçĕ*
*Ертӳçĕ*
*Хĕл мучи*
*Юр пике*
*Çĕнĕ çул*
*Почтальон*
*Вупăр*
*Чике старик Хурсухал*
*Ашапатман карчăк*
*Икĕ мулкач*
*Пакша*
*1-мĕш ача*
*2-мĕш ача*

***Чĕнӳçĕ.***
Килĕр, килĕр, ыр çынсем,
Ваттисем те вĕттисем.
Пире хапăл тăвăрах,
Иртсе ларăр шаларах.
Çĕн çула кĕтсе илер,
Уява шеп ирттерер.
***Ертӳçĕ.***
Пурне те, пурне те, пурне те!
Хĕр ачасемпе арçын ачасене те,
Ашшĕсемпе амăшĕсене те,
Пухăннă мĕн пур хăнасене те
Уяв ячĕпе саламлатпăр!
Савăнма, хавасланма,
Сар хĕвел пек йăл кулма,
Ташлама та юрлама,
Тĕрлĕ вăйă выляма
Йыхравлатпăр!

*Юрласа кĕреççĕ. „Çĕнĕ çул“ юрă. Кĕвви Г.Максимовăн, сăвви В.Кервенĕн.*

***Почтальон.*** Эй, мĕнле хитре юрлаççĕ. Епле маттур ачасем! Кăштах тăхтăр-ха, тăхтăр! Эпĕ сире валли çыру илсе килтĕм.

***Ертӳçĕ.*** Эпир çыру мар, хăнасене кĕтеттĕмĕрччĕ-ха. Кам çырма пултарнă-ши вара пирĕн пата?

***Почтальон.*** Эсир тавçăрса пăхăр: „Вăрăм сухаллă, хитре туяллă, парнесем сире сĕнет...”

***Ертӳçĕ.*** Ачасем, кам-ши ку?

***Ачасем.*** Хĕл мучи!

***Ертӳҫӗ.*** Парăр-ха апла ҫырăвне, хăвăртрах уҫса вулас.
***Почтальон.*** Эсир малтан ташласа кăтартăр, вара паратăп.

*Туслăх ташши „Тăпăртăк“. Кĕввипе сăвви Н.Карлинăн.*

***Почтальон.*** Халĕ вулама та пултаратăр.
***Ертӳҫӗ.***
„Вăрманти уҫланкăра
Пысăк ёлка лартрăмăр.
Пурсăра та хăнана
Чĕнме шухăшларăмăр.
Чунтан кĕтетпĕр.
Хĕл мучипе Юр пике.“
Ачасем, кайса курас килет-и Хĕл мучипе Юр пике патне Ҫĕнĕ ҫул уявне?
***Ачасем.*** Каятпăр!
***Ертӳҫӗ.*** Апла пулсан тапранар. Ырă хыпар илсе килекен почтальон, эсĕ те пирĕнтен ан юл.
***Почтальон.*** Тавтапуҫах чĕннĕшĕн. Савăнсах пыратăп.
***Ертӳҫӗ.*** Алран-алла тытăнар, никам та ҫухалса ан юлтăр. Ачасем, вăрăм ҫула кĕскетме юрă юрлар.

*„Хĕл илемĕ“ юрă. Кĕвви Н.Казаковăн, сăвви Уйăп Мишшин.*

***Ертӳҫӗ.*** Ай-уй, камсем вара кусем? Хĕл мучипе Юр пике пире кĕтме тухнă пулас.
***Вупăр.*** Паллах, эпир. Тата кам пултăр?
***Ертӳҫӗ.*** Ҫук, кусем Хĕл мучипе Юр пике мар пулас. Камсем эсир?
***Вупăрпа Чике старик Хурсухал.***
Эпир – туссем, юлташсем,
Янта саван юлхавсем.
Юратмастпăр ĕҫлеме,
Юрататпăр ай ҫиме.
Эпĕ – Вупăр.
Эп – Хурсухал.
Пиртен пурте хăраҫҫĕ,
Пиртен пурте тараҫҫĕ.

*Ачасене тытам пек тăваҫҫĕ.*

***Чике старик Хурсухал.***
Чике старик Хурсухал
Теҫҫĕ мана курсанах.
Калаҫатăп эп сахал,
Хăрататăп сухалпах.
Ак ҫапла! Ак ҫапла!

*Сухалĕпе силлесе кăтартать.*

Ҫутă, шурă курнакан
Пурте хура пулмалла.
Халĕччен ирĕк пурнакан,
Эх, ман тарҫă пулмалла.
Ак ҫапла! Вăт ҫапла!
Эй, тарҫăсем! Эй, чурасем!
Килĕр часрах кунталла,
Турăр манăн сухала!

***1-мӗш ача.*** Эп кусенчен хӑратӑп. Хӗл мучипе Юр пике патне ҫитейместпӗр ӗнтӗ халь.

***2-мӗш ача.*** Ҫӗнӗ ҫул уявне пӗтерчӗҫ. Юрӑ юрласси те, ташласа савӑнасси те пулмарӗ.

***Вупӑр.*** Паллах, пулмасть. Ӑҫта вӑл тӗрӗслӗх: эсир кашни ҫулах савӑнатӑр, парнесем, кучченеҫсем илетӗр. Эпир вара мӗнрен кая?

***Чике старик Хурсухал.*** Ҫапла ҫав. Манӑн та Ёлкӑра савӑнас килет, анчах пире нихӑҫан та унта чӗнмеҫҫӗ.

***Вупӑр.*** Чӗнмеҫҫӗ ҫеҫ-и? Айккинчен пырса пӑхнине сиссен те хӑваласа яраҫҫӗ. Юр муклашкисем, ай-ай, мӗнле хытӑ лекеҫҫӗ *(хыҫалтан муклашка лекнӗ пек тӑвать).*

***Чике старик Хурсухал.*** Виҫӗм ҫул, астӑватӑн-и, сухала кӗҫ ҫеҫ тӑпӑлтарса кӑлармарӗҫ. И-их, этем чӗппisем!

***Вупӑр.*** Аран-аран ҫеҫ тарса ӗлкӗртӗмӗр ҫав.

***Ертӳҫӗ.:*** Сире, чӑнах та, кӳрентернӗ пулас. Ҫынсемпе пӗрле Ёлкӑра савӑнас тесен вӗсене хӑратмалла мар. Эсир вара тӳрех хӑратма пуҫларӑр: ҫисе яратпӑр, тарҫӑ пулӑр...

***Вупӑр.*** Мӗнле калаҫмалла вара сирӗнпе? Йӑпӑлтатмалла-и? Ай-уй, ку пикен кӗпи мӗнле хитре. Хывса пар-ха ӑна мана. Ман та Ёлкӑра хитре пулас килет.

***Чике старик Хурсухал.*** Эсӗ вара мана хӑвӑн маскуна пар.

***Ертӳҫӗ.*** Каллех ӑнланмарӗҫ. Мӗн тӑвӑпӑр кусемпе, ачасем? Хамӑрпа пӗрле илетпӗр-и е хӑваласа ятратпӑр.

***1-мӗш ача.*** Хӑваласа та ярас килмест, пӗрле илме те хӑрамалла. Хӑйсене ушкӑнра мӗнле тытмаллине ӑнланмарӗҫ.

***2-мӗш ача.*** Тӑхтӑр-ха! Паҫӑр Чике старик Хурсухал: „Турӑр манӑн сухала,” – темерӗ-и-ха? Унӑн сухалӗнче вӑрттӑнлӑх пытанман-ши? Айтӑр тураса пӑхар.

***Ертӳҫӗ.*** Тӗрӗс, ачасем. Кам Чике старик Хурсухалӑн сухалне тураса ярасшӑн?

***2-мӗш ача.*** Хам сӗнтӗм пулсан хамах туратӑп. *(Турать.)*

***Чике старик Хурсухал.*** Ай-ай! Мӗн пулчӗ манпа? Тӗнче хитреленме пуҫларӗ. Ачасен сӑнӗсем куҫ умӗнчех илемленсе пыраҫҫӗ. Эп сире пурне те юрататӑп! Сана та, сана та...

***2-мӗш ача.*** Каларӑм сире Хурсухалӑн сухалӗнче вӑрттӑнлӑх пур тесе.

***Вупӑр.*** Эпӗ вара, эпӗ... *(макӑрнӑ пек тӑвать).* Пурте хитре, пурте лайӑх, пурте Ёлкӑна каяҫҫӗ. Эпӗ ҫеҫ чи усалли, илемсӗрри. Манӑн сухал ҫук вӗт, хӳрене тураймастӑн. Чике старик Хурсухал та пӑрахрӗ мана. Ӳ-ӳ-ӳ!

***1-мӗш ача.*** Эпӗ те ӑнлантӑм. Усалран тармалла мар, ӑна лайӑх пулма пулӑшмалла. Ачасем, айтӑр Вупӑра пулӑшатпӑр.

***Ертӳҫӗ.*** Мӗнле пулӑшма пулать-ши ӑна?

***1-мӗш ача.*** Эпир ӑна ырӑ сӑмахсем калатпӑр, вара вӑл хӑй чӑннипех те лайӑх пулнине ӗненӗ. Усал ӗҫ тума та пӑрахӗ.

***Ертӳҫӗ.*** Апла пулсан, ачасем, атьӑр Вупӑра комплимент калатпӑр.

*Ачасем Вупӑра тӗрлӗ комплимент калаҫҫӗ.*

***Вупӑр.*** Ай! Ай! Эпӗ-и? Ҫавӑн пек-и? Чӗрем ирӗлсех кайрӗ. Тавтапуҫах, ачасем, мана ӑшӑ сӑмахсем каланӑшӑн. Сакӑр ҫӗр ҫул пурӑнатӑп ҫӗр ҫинче, хам ҫапла лайӑх пулнине пӗлмен те. Текех никама та усал тумастӑп. Ырӑ ӗҫ тума тытӑнатӑп.

***Чике старик Хурсухал.*** Эпир те ырӑ ҫынсен шутне кӗтӗмӗр пулас. Тавах сире пурне те!

***Ертӳҫӗ.*** Хаклӑ Вупӑр, Чике старик Хурсухал! Пирӗнпе пӗрле Хӗл мучипе Юр пике патне Ҫӗнӗ ҫул елкине пыратӑр-и?

***Чике старик Хурсухал.*** Паллах.

***Вупӑр.*** Эпир елка ҫинчен юрӑсем те пӗлетпӗр. Атьӑр юрлар.

*„Ёлка“ юрӑ. Кӗвви Ф.Васильевӑн, сӑвви А.Алкан.*

***Юр пике.***

Вӑрманти уҫланкӑра
Пурӑнатӑп юр ҫуртра.
Кашниех мана пӗлет,

Юр пике тесе чĕнет.
Шурă юр пĕрчийĕсем –
Пурте манăн тусăмсем.
Эй, пуçтарăнăр кунта,
Вĕçсе килĕр ман пата.
Савăнăпăр, кулăпăр,
Ташлăпăр та юрлăпăр.
Елкăна çутса хурам-ха, ачасем çухалса ан кайччăр.

***Ертÿçĕ.*** Тинех çитрĕмĕр Ёлка патне. Мĕн тери мăнаçлăн ларать вăл!

***Юр пике.*** Сывă-и, ачасем! Мĕнле çитрĕр? Шăнмарăр-и çул çинче? Ăшăнмалла ташă ташлар пулĕ.

Хаваслă уяв пирĕн паян,
Ташă-кĕвĕ сасси кайтăр ян-ян!

*„Мулкач ларать“ ташă. Кĕвви В.Ходяшевăн, сăвви вырăс халăхĕн, В.Микон куçарнă.*

***Ертÿçĕ.*** Епле илемлĕ ку Ёлка! Пирĕн ачасем çавăн пек илемлетме пĕлеççĕ-ши?

***Юр пике.*** Эпир ăна халех тĕрĕслесе пăхăпăр. Манăн туссем нумай. Вĕсем пулăшĕç мана.

***Икĕ мулкач.*** Эпир сире „Мĕн çакаççĕ Ёлка çине?” текен вăйă выляма сĕнетпĕр. Эпир калакан япаласене Ёлка çине çакаççĕ пулсан – алă çупатпăр, çакмаççĕ пулсан – урапа тапăртататпăр.

Çутă çаврашка,
Ванчăк çунашка,
Капăр теттесем,
Йăлтăр юр пĕрчи,
Чĕрĕ Хĕл мучи,
Хитре шăрçасем,
Сысна çурисем,
Йăлтăр-йăлтăр çумăр,
Тутăх тимĕр-тăмăр,
Çап-çутă çипсем,
Çĕтĕк калушсем.

***Юр пике.*** Çитĕ, çитĕ, маттурсем!

***Ертÿçĕ.*** Юр пике, Хĕл мучи ăçта вара, çаплах курăнмасть.

***Юр пике.*** Вăл вăрманти чĕр чунсене кучченеç валеçме кайнăччĕ, халех килсе çитмелле.

***Ертÿçĕ.*** Атьăр Хĕл мучи çинчен илемлĕ юрă юрлар, вăл вара хăвăртрах килĕ.

*„Хĕл мучи“ юрă. Кĕвви Н.Зиминăн, сăвви М.Сакмаровăн.*

***Хĕл мучи.*** Аван-и, пĕчĕк тусăмсем?

***Юр пике.*** Хĕл мучи, ăçта çÿрерĕн эс паян? Эпир ачасемпе кĕтсе ывăнтăмăр.

***Хĕл мучи.***
Эп çÿрерĕм вăрманта
Кăпăш юр тăрăх утса.
Вăрманти чĕр чунсене
Хăналарăм кунĕпе.
Вăхăт иртнине сисмерĕм,
Эп сире нумай кĕттертĕм.
Халĕ ĕнтĕ савăнар,
Тĕрлĕ юрăсем юрлар.

*„Юр çăвать“ юрă. Кĕвви А.Токаревăн, сăвви А.Кăлканăн.*

***Хĕл мучи.*** Маттур, маттур, ачасем! Савăнтарсах ятăр мана.

***Юр пике.*** Хĕл мучи, санăн парнесем ăçта вара?

***Хĕл мучи.*** Эх, чăнах та, ăçта хурса хăварнă-ши эпĕ хутаçа? Аса илем-ха... мулкачсем патĕнче пултăм, кашкăр çурисем патне çитрĕм, пакшасене хăналарăм. Тен, упа утаман патне манса хăвартăм ăна. Халех кайса илетĕп, эсир унччен савăнăр, юрлăр, ташлăр.*(Каять).*

*„Çĕнĕ çул юрри" юрă. Кĕвви Н.Казаковăн, сăвви П.Ялкирĕн.*

***Ашапатман карчăк.*** Фу! Ку тата мĕнле япала? Кам хушнă сире вăрман варринче юрласа-ташласа çӳреме? Чăрăша та мĕнле тумлантарнă тата! Çук, пулмасть сире валли нимĕнле уяв та.

Унды-фунды, чунды-чах.

Сӳнсе лар, Ёлка, часрах. *(Шăпăрне сулать те, Ёлка сӳнет.)*

Халĕ ĕнтĕ сире Хĕл мучи шыраса тупаймасть. Лайăх кăна шăнса хытатăр та, эп сире пĕрерĕн-пĕрерĕн вĕри çатма çинче ăшаласа çиетĕп. А-а *(анаслать*). Ох, ывăнтăм вăрманта сулланса çӳресе, выртса канам-ха кăштах. *(Елка айне кĕрсе выртать.)*

***Ертӳçĕ.*** Ачасем, Ашапатман карчăк пире, чăнах та, çисе яма пултарать. Хĕл мучине мĕнле тупмалла-ши? Вăрманта çухалса кайсан мĕнле кăшкăраççĕ-ха?

***Ачасем.*** А-у-у!

***Юр пике.*** Айтăр апла Хĕл мучине чĕнсе пăхар.

***Ачасем.*** Хĕл мучи!.. Хĕл мучи!.. Хĕл мучи!..

***Хĕл мучи (кĕрет).*** Мĕн пулса иртет кунта? Мĕншĕн юрă-ташă илтĕнмест? Ёлка та çутатмасть.

***Юр пике.*** Хĕл мучи, кунта Ашапатман карчăк килсе кайрĕ. Вăл ачасене çисе ярасшăн. Халĕ ывăннă та канма выртрĕ.

***Хĕл мучи.*** Апла пулсан эпир ăна урăхла кантарăпăр. Эпир ăна ураран ӳкиччен ташлаттарăпăр. 1, 2, 3! *(Туйипе шаккать те кĕвĕ каять.)*

*Ашапатман карчăк сиксе тăрса ташлама пуçлать, ... ташлайми пулать, тархаслать :*

Çитет, пултараймастăп урăх. Хĕл мучи, хĕрхен мана ват çынна.

***Хĕл мучи.*** Ну, юрĕ. 1, 2 ,3 ! *(Кĕвĕ чарăнать.)*

***Ашапатман карчăк.*** Ах, ах-ах! Ачасем, эсир халь ман пек Ашапатман карчăк ниçта та кураймăр. Эпĕ сире парнесемпе савăнтарасшăн. Ăçта-ха ман хутаç?

Ку кĕпене эпĕ пĕлтĕр Ёлкăра тăхăннăччĕ. Çĕнĕ пекех, кăштах сапламалла çеç. Кама парнелем-ши? Сана-и, сана-и?

Ку вара асамлă сĕтел çитти. Эх, мĕн чухлĕ тутлă апат çитермен-ши вăл мана! Ăшаланă кушак, пăшăхланă курак, тăварланă курăк... кама парнелес-ши куна?

Ман юратнă çатма! Мĕн кăна тума пулмасть унпа? Малтан çапса анратма, кайран ăшаласа çиме... Сана кирлĕ-и? Сана-и?

Никама та кирлĕ мар ман парнесем. Хам ĕмĕрте пĕрре ырă ĕç тăвас терĕм те, унта та пулин пулмарĕ.

***Хĕл мучи.*** Юрĕ-çке, Ашапатман, чăнах та ырă тăвас килет пулсан эпĕ сана пулăшăп. Хутаççуна çыхса хур каялла. *(Туйипе шаккать.)* 1, 2, 3! Халь ĕнтĕ уçса пăх.

***Ашапатман карчăк*** *(уçса пăхать).* Паччушки! Кусене никама та памастăп, хама кирлĕ.

***Хĕл мучи.:*** Эй-яй-яй! Каллех ташлас килсе кайрĕ-им?

***Ашапатман карчăк.*** Çук, çук, çук! Веçех ачасене валеçсе паратăп. Анчах вĕсем мĕн те пулин туса кăтартчăр.

***Юр пике.*** Ачасем, айтăр малтан Ёлкăна çутар.

***Хĕл мучи.*** 1, 2, 3, çутăл Ёлка хăвăртрах! Атьăр пурте пĕрле калар.

***Ачасем.*** 1, 2, 3, çутăл Ёлка хăвăртрах! *(Елка çутăлать.)*

***Юр пике.***

Капăр Ёлка ялкăшать,

Юмахри пек туйăнать,

Йăл кулса куçне хĕсет,
Ташлама пире чĕнет.

*„Хĕл илемĕ“ ташă. Кĕвви А.Орлов-Шуçăмăн, сăвви И.Тукташăн.*

***Ертÿçĕ.*** Хĕл мучи, эсĕ пире елка çутатса парса савăнтартăн. Пирĕн сана та выляттарас килет.

***Пакша.*** Вăййи çапларах. Ачасем пирĕн хыççăн тĕрлĕрен хусканусем тăваççĕ. Санăн эпир мĕн тунине пĕлмелле.

***Хĕл мучи.*** Килĕшетĕп, хаваспах вылятăп.

***Пакша.***
Ырă мучи, Хĕл мучи,
Пăх-ха пирĕн çинелле.
Эс кала-ха, Хĕл мучи,
Эпир мĕскер тунине.

*Ачасем сĕрме купăс каланă пек тăваççĕ.*

***Хĕл мучи.*** Пĕлтĕм, пĕлтĕм. Эсир жвачка чăмланă та ăна резина пек унталла-кунталла тăсатăр.

***Пакша.*** Çук, пĕлеймерĕн, Хĕл мучи. Эпир сĕрме купăс каларăмăр.

***Хĕл мучи.*** Вăт тата. Ну, теприне пĕлетĕпех.

***Пакша.***
Ырă мучи, Хĕл мучи,
Пăх-ха пирĕн çинелле.
Эс кала-ха, Хĕл мучи,
Эпир мĕскер тунине.

*Ачасем шăхлич каланă пек тăваççĕ.*

***Хĕл мучи.*** Э-э, пĕлтĕм. Эсир вĕри чей ĕçетĕр те, сивĕтес тесе ун çине вĕретĕр пулмалла.

***Пакша.*** Çук, каллех пĕлеймерĕн, Хĕл мучи. Эпир шăхлич каларăмăр.

***Хĕл мучи.*** Эккей, ватăлтăм пулас çав, часах тавçăраймастăп. Виççĕмĕшĕнче пĕлетĕпех. Кăтартăр-ха эппин.

***Пакша.***
Ырă мучи, Хĕл мучи,
Пăх-ха пирĕн çинелле.
Эс кала-ха, Хĕл мучи,
Эпир мĕскер тунине.

*Ачасем балалайка каланă пек тăваççĕ.*

***Хĕл мучи.*** Хальхинче пĕлтĕмех. Эсир пальтосем çинчен юр шăлса антаратăр, хырăмусем юрпа вараланнă та.

***Пакша.*** Каллех пĕлеймерĕн, Хĕл мучи. Эпир балалайка каларăмăр. Ан кулян, Хĕл мучи, ку хутĕнче пĕлетĕнех. Ачасем, атьăр тепре кăтартатпăр.
Ырă мучи, Хĕл мучи,
Пăх-ха пирĕн çинелле.
Эс кала-ха, Хĕл мучи,
Эпир мĕскер тунине.

*Ачасем параппан çапнă пек тăваççĕ.*

***Хĕл мучи.*** Эсир параппан çапатăр, çапла вĕт.

***Ачасем.*** Çапла, çапла!

***Хĕл мучи.*** Халĕ вара манăн черет. Эпĕ сире тупмалли юмахсем калатăп. Кам чи малтан тĕрĕс хуравлать, çавна кучченеç лекет. Юр пике, пулăш-ха мана.

***Юр пике*** *тупмалли юмахсем калать:*
Вĕçет – чĕнмест, выртать – чĕнмест, вилет – кĕрлет, чарăна пĕлмест (юр).
Ту-ту тăвать тăват пир,
Тăваттăш те кăвак пир.
Тăваттăш те çăм тапать,
Шăлĕсемпе шăмма ватать. (Хĕллехи уйăхсем)

Пĕчĕк-пĕчĕк çăраççи
Ӳкрĕ-ӳкрĕ – çухалчĕ.
Уйăх курчĕ, хĕвел илчĕ. (Юр йăлтăркки)

Çулленех пĕр мучи килет, шурă кунсем илсе килет. (Хĕл).

Асаннен тӳшекки çурăлчĕ, пур тĕнчене тĕк тулчĕ. (Юр çуни).

Куçăм та çук,
Аллăм та çук,
Тĕрĕ тĕрлес енĕпе
Манран ăста çын та çук. (Сивĕ).

Пӳрт хыçĕнче шур тына
Каймас тесе мухтанать,
Хĕвел хĕртсе пăхсанах
Наччас кайса çухалать. (Юр)

***Ертӳçĕ.*** Пирĕн ачасем Çĕнĕ çул уявне тахçанах хатĕрленме пуçланă. Кашни класс стена хаçачĕ кăларнă, класа илемлетнĕ, Хĕл мучи валли çурт тунă, ӳкерчĕксем ӳкернĕ тата темĕн тĕрлĕ япала ăсталанă. Шăпах çак конкурссене пĕтĕмлетме вăхăт.

*Шкул директорĕ грамотăсем парать, Хĕл мучи – кучченеç.*

***Ертӳçĕ.*** Курăр-ха, Хĕл мучин хутаççи нимĕн чухлĕ те пушанмарĕ. Унта кучченеç тата та нумай пулас. Атьăр, ачасем, Хĕл мучине сăвăсем каласа паратпăр.

***Юр пике.*** Паллах, каласа памалла. Хĕл мучи сăвă итлеме çав тери юратать. Хăшĕ пуçлать-ха?

*Ачасем сăвă калаççĕ.*

***Хĕл мучи.*** Маттур та иккен эсир, ачасем. Мĕн чухлĕ сăвă вĕреннĕ! Питĕ лайăх хатĕрленнĕ Çĕнĕ çул уявне.
***Юр пике.*** Çакăн пек пултаруллă ачасемпе манăн юрă юрлас килет. Атьăр юрлатпăр.

*„Çĕнĕ çул ёлки“ юрă. Кĕвви Г.Хирбюн, сăвви И.Малкайăн.*
*„Ёлкăра“ ташă. Кĕвви Г.Лисковăн, сăвви И.Малкайăн.*

***Хĕл мучи.*** 2017 çул ăнăçлă иртрĕ. Пурте ырă-сывă, лайăх вĕрентĕр. Çĕнĕ 2018 çула кĕтсе илме те вăхăт çитрĕ.
***Çĕнĕ çул.***
Аван пурнатăр-и, туссем,
Ĕçсем пыраççĕ-и ăнса?
Тумашкăн пысăк утăмсем

Эп ыр сунап сире чунтан.

***Хӗл мучи.***

Ну, хаваслă Çӗнӗ çул,
Кивӗ çул пек ӗçчен пул.
Пӗр ӗçрен те эс ан тар,
Яланах малта уттар.

***Çӗнӗ çул.*** Çапла пуласчӗ-ха. Хальлӗхе вара эп çамрăк, ман выляс килет. Ачасем, вылятпăр-и?

*„Хӗл мучи туйи“ вăйă.*

***Ертӳçӗ.*** Тавтапуç, Хӗл мучи, пире çакăн пек уяв туса панăшăн. Вăрман уçланкинчи Ёлка пире çав тери килӗшрӗ. Тӗрӗс калатăп-и, ачасем?

***Ачасем.*** Килӗшрӗ!

***Ертӳçӗ.*** Хӗл мучи паян пирӗнпе пӗрле юрларӗ те, ташларӗ те. Вăл текех çамрăк мар ӗнтӗ, канас та килет пулӗ.

***Юр пике.*** Чăнах та, эпир Хӗл мучипе иксӗмӗр халӗ каятпăр.

***Хӗл мучи.*** Эсир, ачасем, ан васкăр. Малалла та юрлăр, ташлăр, выльăр, савăнăр. Сирӗнпе Çӗнӗ çул юлать. Эпир вара тепӗр çул тепре тӗл пулăпăр. Чипер юлăр, сывă ӳсӗр, лайăх вӗренӗр!

***Юр пике.*** Чипер юлăр, тусăмсем!

*Тухса каяççӗ.*

***Çӗнӗ çул.*** Тунсăхлама кирлӗ мар, ачасем. Çӗнӗ 2018 çул пуçланать кăна-ха. Атьăр ăна кӗтсе илме юрăпа тухар.

*Юрă юрласа тухса каяççӗ. Хӗлле“ юрă. Кӗвви Г.Хирбюн, сăвви Уйăп Мишшин.*

*Сценарие хатӗрленӗ чух Юхма Мишшин тата ытти çыравçăсен сăввисемпе усă курнă.*